**Пурнăҫа, ҫĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, ҫавна юрат!**

# ТУСЛĂХ

**НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАҪАЧĔ**
**ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА**

*Хаҫат 1931 ҫулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуҫланă.* | 135 N (4704) | *1998 ҫулхи ноябрь (чӳк) уйăхĕн 27-мĕшĕ, эрнекун* | *Палăртнă хакпа.*

# Ялăн шăпи хăйĕн аллинче

## (Районти семинар-канашлуран)

Кивви ҫĕннине упрать теҫҫĕ пулин те, хальхи вăхăтра, финанс кризисĕн тапхăрĕнче, ял хуҫалăх валли машинăсемпе тракторсем, комбайнсем, ҫаклатмалли хатĕрĕсем туянасси ҫинчен вара сăмах та ҫук. Каласу пур техникăпа тирпейлĕ усă курасси, ăна вăхăтлă юсасси, юсаса ҫĕнетесси ҫинчен пырать. Шăпах ҫакна тĕп тимлĕх уйăрчĕ те ĕнтĕ район администрацийĕн пуҫлăхĕ Ф.С.Сибагатуллин шăматкун хуҫалăхсен председателĕсем, администраци аппарачĕн яваплă ĕҫченĕсем, ял хуҫалăх управленийĕн тĕп специалисчĕсем хутшăннипе иртнĕ семинар-канашлура. Район ертӳҫисем хуҫалăхĕсенчи техника паркĕн шайĕшĕн ăнсăртран ҫеҫ хумханмаҫҫĕ, мĕншĕн тесен кризиса пула хамăр ҫĕршывра чылай йышши ял хуҫалăх машинисене туса кăлармаҫҫĕ, ыттисене вара “ҫывăхри ют ҫĕршывсенче” тăваҫҫĕ. Иккĕмĕшĕнчен, ака, утҫи, тырҫи вăхăчĕсем тĕлне кивĕ техника юсаса хатĕрлеме те ҫĕннине туяннинчен ҫăмăлах маррине пурте пĕлеҫҫĕ. Ҫакна лайăх ăнланакан хуҫалăхсенче ҫак ыйтăва татса пама май тупаҫҫĕ, ĕҫсене йĕркеллĕ туса пыма тăрăшаҫҫĕ. Ку тĕлĕшпе семинара хутшăннисене “Кондурча” хуҫалăхăн Тури Нурлатри кооперативăн опычĕпе паллаштарчĕҫ. Унта техника мĕнле пăхни, ăна хĕллене упрама лартни, юсани ырă сăмахсене ҫеҫ тивĕҫлĕ. Чăнах та, семинара хутшăннисенчен чылайăшĕ механизаторсем техника хуҫа пек тирпейлĕ тыткаланинчен тĕлĕнчĕҫ, хăш-пĕр ертӳҫĕсем вара тĕплĕн сăнанипе пĕрлех кунта курнине хăйсеннипе ăмсанса танлаштарчĕҫ. Техника паркри йĕркелĕхпе кондурчасем ҫеҫ мухтанма пултараймаҫҫĕ ĕнтĕ.

Анчах та ăмсану кунта вырăнлă мар, кондурчасем хăйсен вăйĕпе майĕсене ҫеҫ шанаҫҫĕ. Техника шанчăклă пулнипе хирти ĕҫсем вăхăтĕнче аяккинчен кама та пулин явăҫтарма тăрăшмаҫҫĕ. Гаражсенче, мастерскойсенче йĕркелĕхе кăтартма ҫеҫ туман: кунта техника шайĕшĕн ытти хуҫалăхсенчи пек сезон вăхăтĕнче ҫеҫ мар, ҫулталăк тăршшĕпех тăрăшаҫҫĕ. Кăна “Гостехнадзор” инспекцийĕн начальникĕ Р.С.Сатдаров уйрăм палăртрĕ. Вăл семинарта ҫак хуҫалăхри техника упрама лартмалли, юсамалли, техника тĕрĕслевĕ иртмелли, пăхмалли йĕрке ҫинчен тĕплĕн каласа пачĕ.

Ку чăнах та ҫапла пулнине хăнасем хăйсем те курса ĕненчĕҫ. Ĕҫсене вĕҫленĕ хыҫҫăнах кăткăс техника, ҫаклатса ĕҫмелли оборудование кирлĕ пек упрама лартнă. Хĕллехи тапхăрта ĕҫе явăҫтарман тракторсене пĕр вырăна пуҫтарнă. Техника юсама вара питĕ лайăх условисем туса панă. Кунта сӳресемпе культиваторсемсĕр пуҫне тырă ҫапакан комбайнсене, выльăх апачĕ хатĕрлекен техника питĕ тĕплĕн тĕрĕслесе юсаҫҫĕ. Вăрттăнлăх мар ĕнтĕ, чылай хуҫалăхсенче пысăк калăпăшлă техника юсассине ку е тепĕр массăлла кампани пуҫланас умĕн эрне, вунă кун малтан, ҫынсем ҫитмен вăхăтра ҫеҫ аса илеҫҫĕ, ҫапла майпа техника кирлĕ пек хатĕрлеймеҫҫĕ. Тури Нурлат ҫыннисем вара пачах урăхла: ҫулла ҫуна хатĕрлеҫҫĕ, хĕлле - урапа.

(Вĕҫĕ 2-мĕш стр.).

# Ноябрĕн 29-мĕшĕ - Анне кунĕ

Кăҫал Раҫҫейре, ҫаплах Тутарстанра уявсен шучĕ ӳсрĕ. Раҫҫей Федерацийĕн Президенчĕн 1998 ҫулхи январĕн 30-мĕшĕнчи Указĕпе килĕшӳллĕн ноябрь уйăхĕн юлашки вырсарникунĕнче кăҫалтан Анне кунне паллă тума йышăннă. Ҫĕнĕлĕх тĕллевĕ ансат: уява ҫемьесене ҫирĕплетес, ача амăшĕн пĕлтерĕшне тата хальхи обществăра хĕрарăм-анне рольне ӳстерес тĕллевпе иртterеҫҫĕ. Вăл ҫĕнĕ шанăҫ парать, ҫывăх ҫынна ытларах юратма пулăшать. Пирĕн аннесем, мăшăрсем, аппасемпе йăмăксем тата туссем мĕн чухлĕ йывăрлăх тӳссе ирттернĕ вĕт. Вăрăм ĕҫ кунĕ, вăрҫă ҫулĕсем, килти ыйтусемпе ҫитменлĕхсем, укҫа, ĕҫ ҫукки, эрех ĕҫекен тата наркотиксемпе иртĕхекен ывăлĕшĕн е хĕрĕшĕн пăшăрханни. Кăҫал та ҫак уяв финанспа экономика кризисĕнче ирттет - апла пулсан, атăрьха хĕрарăм-аннесене, ачасемпе ĕҫлекен хĕрарăмсене, ачасене компенсаци тӳлемелли ыйтăва, пĕччен пурăнакан тата нумай ачаллă хĕрарăмсене, пĕчĕк тупăшлă ҫемьесене тепĕр хут тимлĕх уйăрар. Ҫак мероприятисене предприятисен администрацийĕсем, общественность, хĕрарăмсен организацийĕсем, больницăсемпе шкулсем, ача-пăча сачĕсем хутшăнма пултараҫҫĕ. Ку арсеналта тематика хатĕрĕсем ҫителĕклĕ: выставкăсем, концертсем, хĕрарăм-аннеҫсене чысласси тата ытти те.

... Хĕрарăм-анне. Вăл пурне те пулăшма тăрăшать. Общество унăн умĕнче ялаңах парăмра.

**Пĕтĕм тĕнчери инвалидсен кунĕ**

# Вăхăт пире чунсăрлатмалла мар

**“Туслăх” хаҫат корреспонденчĕн ыйтăвĕсем ҫине хулапа район администрацийĕн халăха социаллă хӳтлĕх паракан управлени начальникĕ Л.Н.Дильмухаметова хуравлать.**

**- Лидия Николаевна, Пĕтĕм тĕнчери инвалидсен кунне эпир кăҫал та палăртăпăр. Халăхăн ҫак категорийĕ ҫынсене шеллени ҫинчен нумай калаҫма пулать, анчах та рынок хутшăнăвĕсем социаллă сферăна йывăр условисенче хăварнипе килĕшме тивет. Калăр-ха, уйрăмах пулăшу кирлĕ халăхăн ҫак сийĕн лару-тăрăвне ҫăмăллатас тесе хулапа район мĕнле конкретлă ĕҫсем пурнăҫлать?**

- Вăхăт халь питĕ йывăр. Социаллă хӳтлĕх паракан органсен задачи ҫавăн пек: уйрăмах нушаланакансене пулăшмалла. Вĕсен шутĕнче инвалидсем те. Районта Отечественнăй вăрҫă инваличĕсем 336 ҫын, Совет Ҫарĕн - 47, ачаранах инвалид шутланакансем - 453, ĕҫре сусăрланнисем 56 ҫын тата чи нумайăи - чирлесе инвалида тухнă 1322 ҫын пурăнать. Куратăр ĕнтĕ, йывăрлăхсем пирĕн ҫителĕклĕ, анчах та эпир Республика программипе, 1993 ҫулта вăя кĕнĕскерпе килĕшӳллĕн, инвалидсене кашнине пулăшма тăрăшатпăр. Ҫапла, вĕсем ҫутăшăн, газшăн, ăшăшăн, хваттершĕн, тĕп категори - телефон услугисемшĕн тӳленĕ чухне 50 процентлă ҫăмăллăхсемпе усă кураҫҫĕ, октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуҫласа майăн 15-мĕшĕччен хуласем хушшинчи маршрутсемпе ҫӳреме вĕсене ҫăмăллăхсем параҫҫĕ. Паллах, пĕрлехи социаллă лару-тăру палăрать - Нурлат районĕнче кăна лайăх пурнăҫ пулма пултараймасть, пенси укҫине те вăхăтлă параймастпăр, Пенси фончĕн уйрăмĕ пуҫтарнă укҫа ҫитмест, анчах та хулапа район администрацийĕ, унăн социаллă хӳтлĕх пайĕ уйрăмах нушаллисене пулăшма районти социаллă программа енĕпе активлă ĕҫлеме тăрăшаҫҫĕ.

**- Экономикăн ҫак кăткăс тапхăрĕнче юлашки ҫулсенче инвалидсен йăлана кĕнĕ вунăкунлăхĕ конкретлă мĕнле иртĕ?**

- Ҫак мероприяти тĕлне эпир маларахах хатĕрленме пуҫлатпăр. Мероприятисен планне турăмăр, администраци пуҫлăхĕн пĕрремĕш ҫумĕ Ю.В.Терентьев ертсе пыракан комисси йĕркеленĕ. Пирĕн практика ҫапла: инвалидсене ĕҫ коллективĕсем чей ĕҫме чĕнеҫҫĕ, вĕсене валли концертсем йĕркелеҫҫĕ, парнесем, сувенирсем, апат-ҫимĕҫ пакечĕсем, кондитер пуххисем параҫҫĕ, пирĕн социаллă пулăшу уйрăмĕсен вăйĕпе йывăр чирлĕ инвалидсен хваттерĕсенче вактĕвек юсав ĕҫĕсене пурнăҫлассине, стационарта сипленекенсем патне каяссине йĕркелĕпĕр.

(Вĕҫĕ 2-мĕш стр.).

*** Культура хыпарĕ**

## Фестиваль утăмĕсем

Республикăра иртекен чăваш юррин смотрĕ зонăсенче вăй илме пуҫларĕ. Иртнĕ шăматкун Лениногорскри Культура ҫуртне пухăнчĕҫ чăвашсем. Анат Кама, Заинск, Пĕкĕлме, Лениногорск, Павлă районĕсемпе Лениногорск, Анат Кама, Пĕкĕлме, Ҫырчалли хулисенчи юрăҫсемпе коллективсем хутшăнчĕҫ унта. Жюри юрăҫсен ăсталăхĕ ӳснине палăртнă фестивале йĕркелекенсен ĕҫне те мухтамалла.

## Хаҫат ҫырăнакансене пĕлсе тăма

1999 ҫулхи пĕрремĕш ҫур ҫула районта тухса тăракан “Дуслык” (“Дружба”, “Туслăх”) хаҫата ҫырăнтарасси октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуҫланать. Хаҫат хакĕ - 25 тенкĕ те 20 пус; Аслă Отечественнăй вăрҫа хутшăннисен тата инвалидсен, Афганистанра пулнă воин-интернационалистсен, ЧАЭС аварие пĕтернĕ ҫĕре хутшăннисен 50 процент кăна тӳлемелле (ҫирĕплетекен документсем пулсан).

**Ҫапла, хаҫат ҫырăнтарасси малалла пырать, ҫырăнтаракан пунктсеневаскăр.**

## *Самолетпа вĕҫĕр*

Хусантан Нурлата самолет вĕҫет. Кашни кун 8сехет те 40 минутра самолет Хусантан вĕҫсе тухать те Нурлатри аэропорта 9 сехет те 20 минутра ҫитет. Билет хакĕ 80 тенкĕ.

Ҫакă пассажирсемшĕн ырă хыпар пулĕ тесе шутлатпăр. Тĕплĕнрех пĕлес текенсем аэропорт администрацине 5-43-56 номерпе шăнкăравласа пĕлме пултараҫҫĕ.

**Официаллă хроника**

## Ертӳҫĕсем улшăнnă

Ноябрĕн 23-мĕшĕнче хресченсен хуҫалăхĕсен “Чулпан” ассоциацийĕн членĕсен пĕрлехи пухăвĕ пулнă, унта йĕркелӳ ыйтăвне пăхса тухнă. Анвар Мингареевич Шаяхметовăн заявленине тĕпе хурса, ăна хуҫалăх председателĕн тивĕҫĕсенчен хăтарнă. Хресченсен хуҫалăхĕсен “Чулпан” ассоциацийĕн председателĕ пулма малтан “Комбайн” ассоциаци председателĕ пулса ĕҫленĕ Дамир Вакифович Фассахова суйланă.

Ноябрĕн 24-мĕшĕнче “Комбайн” ассоциаци членĕсен пĕрлехи пухăвĕ пулнă. Д.В.Фассахова урăх ĕҫе куҫарнипе пуху ăна хуҫалăх председателĕн тивĕҫĕсенчен хăтарнă. “Комбайн” ассоциаци председателĕ пулма Рашит Аглиуллович Ибатуллина, унччен хуҫалăх председателĕн ҫумĕ пулса ĕҫленĕскере, суйланă.

# Ялăн шăпи хăйĕн аллинче

(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр.).

Урăххи çинчен каламастпăр ĕнтĕ, вĕсем кăçал вăрах вăхăт хушши усă курнă БМсене юсаса пĕтерессĕ. Механизаторсемпе шоферсем пур çĕрте те йĕрке тытассĕ. Техника тивĕçтерекен пункт та тимлĕхе тивĕçлĕ. Çынсем хăйсен тивĕçĕсене яваплăх туйса пурнăçланипе ĕçре кирлĕ условисем тунă. Гаражсемпе мастерскойсенче ăшă, юлашкинче питĕ лайăх оборудованиленĕ йăла пӳлĕмĕ пур, çаплах кунта 80-мĕш çулсем варринче тунă сывлăха лайăхлатакан комплекс та сыхланса юлнă-ха. Юсанă кашни техника ятарлă комисси йышăнать, укçа та çав комисси пĕтĕмлетĕвĕ тăрăх тӳлессĕ.

Ыйтăва тепĕр енчен тимлĕх уйăрар-ха. "Кондурча" хуçалăх ĕçченĕсем хăйсем патĕнче условисем питĕ лайăх пулнине пăхмасăр, хăш-пĕр чухне, вăй çитмесен, техника юсама "Сельхозтехника" пĕрлешĕве ăсатассĕ. Кунтан тĕлĕнмелли çук, пачах урăхла - ку вăл ĕç çине хуçалла пăхни кăна. Акă хальхи вăхăтра та çак хуçалăхăн икĕ Т-70 тракторĕ пĕрлешӳре юсавра. Çав вăхăтрах, чылай хуçалăхсем тракторсене тата ытти йышши техника хăйсем патĕнче те юсамассĕ, "Сельхозтехника" та ăсатмассĕ, тӳрре тухас тесе çĕр сăлтав тупассĕ. Çавăнпа та семинарăн юлашки пайĕ шăп кăна кунта, техника "сиплекен" хулари центрта вĕçленчĕ.

Ку ахальтен пулмарĕ иккен. Юлашки çулсенче предприяти, хуçалăхсем умĕнче хăйĕн авторитетне çухатнăскер, халь ĕçе тĕпрен улăштарнă, ĕçе йĕркелессипе те, дисциплинăна çирĕплетессипе те. Çакна çĕнĕ ертӳçĕ пысăк вăй хурса тăрăшнин результачĕ пек хаклама пулать, çаплах ăна районти влаçсем, "Татсельхозтехника" холдинг компанийĕ пысăк пулăшу панă. Пĕрлешĕвĕн тĕп инженерĕ А.Н.Кузнецов семинара хутшăннисене кунта мĕнле юсав ĕçĕсене пурнăçлани, мĕнле детальсемпе узелсене çĕнĕрен туни, çав вăхăтрах мĕнле йышши ял хуçалăх машинисем туса хатĕрлени тата малашне мĕнлисене туса хатĕрлеме пултарни çинчен тĕплĕн каласа пачĕ. Йăлана кĕнĕ юсав ĕçĕсене пурнăçланисĕр пуçне, кунта халь "ДОН" комбайнсен хаклă узелĕсене - вариаторсене, элеватор сăнчăрĕсене, çыхăнтаракан муфта, хăвăртлăх коробкине майлама пултарассĕ. Кашнин çинче уйрăммăн чарăнса тăма кирлех те мар пулĕ, мĕншĕн тесен кăсăкланакан çынсем пурте хăйсен куçĕсемпе курчĕç - хуçалăхсен тĕп инженерĕсем валли вырсарникун ятарласа семинар йĕркеленĕччĕ.

Паллах, юсамалли ял хуçалăх машинине пурне те "Сельхозтехника" ăсатма задача тăратмассĕ. Çапла, хăйсен вăйĕпе тума пултарнине, пĕчĕк тăкаксем кăларса, вырăнсенчех юсама тăрăшмалла. Анчах та урăххи пăшăрхантарать. Хăш-пĕр хуçалăхсем хăйсем патĕнче запас пайсем çуккине, ĕçе йĕркелекен пулманнине пăхмасăр, "Сельхозтехникăран" та пулăшу ыйтмассĕ. Çавăнпа та пур çĕрте те техника майлама мĕн кирлине палăртса, хăшне ăçта юсамаллине татса памалла та, техника лайăхрах, тĕплĕ юсама пĕрлешĕве ăсатма мĕнпур мерăсене йышăнмалла. Кунта вара, каларăмăр ĕнтĕ, условисем те, майсем те пур, ĕç кăна сахалтарах. Хуçалăхсен тата çакна шута илмелле: пĕлтĕрхи практикăпа танлаштарсан, кăçал "Сельхозтехника" кунта юсанă кашни техникăшăн пахалăхăн гарантиллĕ талонĕсене пама планлать. Юсас тĕлĕшпе вара вăхăта тăсмалла мар, администраци пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ Ю.В.Терентьев семинар-канашлура тухса каласса, чылай хуçалăх сроксемпе кая юлнине, çулталăк вĕçлениччен çак ыйтупа хастар ĕçлемеллине палăртрĕ.

Пурнăç мĕнле йывăр пулсан та никама та шанмалли çук, пирĕншĕн никам та ĕçлемĕ - хамăршăн хамăр яваплă. Çавăнпа та Фатих Саубанович семинарта тухса каласса кризис район экономикинче вăйлă палăрнине пĕлтерчĕ, çак йывăр ларутăрура эпир хамăра çеç шанма пултарнине, кашни ĕçе тĕплĕ шухăшласа пурнăçламаллине пĕрре мар асăнчĕ. Çакна ертӳçĕсем кăна мар, ĕçченсем те ăнланмалла. Ертӳçĕсен тата яваплăрах пулмалла. Ял хуçалăхĕ çирĕп пултăр тесен выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессине упраса хăвармалла, уйрăммăн илсен, обществăлла выльăх-чĕрлĕхе. Чылай ыйтăва татса парасси аш мĕн чухлĕ туса илнинчен килет, çав шутра, уйрăммăн илсен, "Сельхозтехникăпа" расчет тăвасси те, ăна чылай хуçалăх пысăк парăма кĕнĕ. Сĕт сутсан, хуçалăхсен кассинче чĕрĕ укçа пулать. Çакна халь республикăри власть органĕсем çирĕп тĕрĕслессĕ, администраци пуçлăхĕ те ку ыйтăва тимлĕх уйăрчĕ: сĕт суса илсе сутассине пĕлтĕрхи шайран чакарнă кашни хуçалăх ертӳçин канашлура çакăн сăлтавĕсене ăнлантармаллаччĕ тата отрасле кирлĕ пек ĕçлеме пулăшма йышăнакан мерăсене асăнмаллаччĕ. Фатих Саубанович концентратсемпе пулăшасси çинчен каларĕ пулин те, çав вăхăтрах пĕтĕмĕшле выльăх шутне ӳстерме, выльăх-чĕрлĕх продукцине туса кăларма уйрăм хушма хуçалăхсен майĕсемпе анлăрах усă курмаллине уйрăм палăртрĕ. Администраци пуçлăхĕ выльăх-чĕрлĕх продукцийĕ палăрмаллах ӳсни уйрăм хуçалăхсенчен килнине малтанах каларĕ, хресченсен уйрăм хуçалăхĕсем сахал тăкак кăларса нумай продукци туса илме пултарнине палăртрĕ. Унăн шучĕпе, çакăн çинчен вырăнта тухса тăракан хаçат страницисенче те уйрăм калаçу ирттермелле. Фатих Саубанович район халăхне çĕрулмипе, пахча çимĕçпе, ытти хăш-пĕр продуктсемпе хамра хамăр тивĕçтерес тĕлĕшпе йышăннă программа задачисем çинче чарăнса тăчĕ, çакна май ял хуçалăхĕпе апат-çимĕç промышленноçĕнче ĕçлекенсене професси уявĕпе саламланинчи тĕп самантсене палăртрĕ. Çак тĕлĕшпе шкулсенчи опытлă участоксене анлăлатассипе, вĕренекенсене ял хуçалăх культурисене акса ӳстерме явăçтарассипе çыхăннă ыйтупа районти шкулсен директорĕсемпе учителĕсен тĕлпулăвне йĕркелесе вĕсен шухăшĕсене район хаçачĕн страницисенче пичетлени вырăнлă пулĕ тесе шутлатпăр. Кунта конкретлă тĕслĕхсем те пур ĕнтĕ. Çапла, сăмахран, Нурлат хулинчи 4-мĕш номерлĕ шкул çитес çул çĕрулми лартма 3,5 гектар участок тара илесси çинчен "Дуслык" хуçалăхпа договор тунă. Çак çĕнĕлĕхе ытти шкулсем те хутшăнасса шанатпăр. Хуçалăх ертӳçисем вара шкул коллективĕсен шухăшĕсене пурнăçа кĕртме пулăшмалла, мĕншĕн тесен шкулсем акса ӳстернĕ тухăçăн ытлашшине сысна фермисем валли хатĕрлесе хурĕç.

Кĕскен каласан, семинар-канашлура çĕкленĕ ыйтусем, пăхса тухнă задачăсем хальхи условисенче питĕ актуаллă. Вĕсен кирлĕлĕхне, çивĕчлĕхне ăнланасси, çаплах пурнăçа кĕртесси тӳрремĕнех ертӳçĕсенчен, вĕсем ĕçе йĕркелеме пултарнинчен килет.

**Р.ГИЛЬМУТДИНОВ.**



# ЫРĂ ЯТА ТИВĔÇЛИСЕМ

*Ӳкерчĕкре эсир Якуркелĕнчи вăтам шкулти Анатолий Петрович Магин учителе куратăр. Вăл учитель-методист ята тивĕç пулнă. Унăн ĕç стажĕ вăтăр çул ытла шутланать. Анатолий Петрович вырăс чĕлхипе литературине вĕрентет. Галина Владимировна Терентьева шкул директорĕн воспитани парас енĕпе ĕçлекен çумĕ пулса вăй хурать. Вăл - шкулта иртекен интереслĕ мероприятисене йĕркелекен. Маларах вăл 12 çул хушши пионервожатăй пулса вăй хунă. Галина Владимировна Шупашкарти патшалăх университечĕн филологи факультетĕнче куçăмсăр вĕренет.*

*Людмила Алексеевна Григорьева - пуçламăш классене вĕрентекен учительница. Вăл хăйĕн пурнăçĕн чĕрĕк пайне ачасене вĕрентессине халалланă, учитель-методист ята тивĕç пулнă. Директорăн вĕрентӳ енĕпе ĕçлекен çумĕ Антонина Алексеевна Белова та çирĕм çула яхăн вăй хурать. Вĕсем пурте хăйсем те çак шкултан вĕренсе тухнă.*

*Н.АЗИЗОВ сăнӳкерчĕкĕ.*

# Вăхăт пире чунсăрлатмалла мар

(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр.).

Района инвалидсем валли "Крутушка", "Васильевский" тата Павлă çывăхĕнчи "Березки" санаторисене 20 путевка уйăрса панă. Декабрь уйăхĕн пĕрремĕш вунăкунлăхĕнче районти тĕп больницăра тата участоксенчи больницăсенче инвалидсене черетсĕр йышăнĕç, декабрĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса 4-мĕшĕччен вĕсем хулари мунчара тӳлевсĕр çăвăнма, парикмахерскире çӳç кастарма пултарĕç. Шкулсенче тимуровецсен юхăмне çĕнетсе ярасса та шанатпăр. Юр тасатасси, вутă çурасси, чӳрече хушшине ăшăтасси, хваттерсене тирпейлесси, инвалидсем валли концертсем йĕркелесси, библиотекăран кĕнеке, магазинтан апат-çимĕç илсе килесси, тăванĕсем патне çыру çырасси - кусене шкулта вĕренекенсем пурнăçлама пултарассĕ вĕт-ха. Кунта кăмăл кăшт вăхăт çеç кирлĕ. Пирĕн "Ветеран" клуб та, районта иртекен пур мероприятисене те хутшăнаканскер, инвалидсем валли концерт кăтартма планлать. Çаплах эпир ТР Минсобесĕн "Пĕтĕм тĕнчери йывăрлăхсене пăхмасăр, пĕр-пĕрне пулăшар" акцие те хутшăнатпăр. Ĕç кунта акă мĕнре. Инвалидсем туса хатĕрленĕ вак-тĕвек япаласене аукционра сутĕç, укçа-тенке вара конкретлă çемьене, çынна парĕç.

**- Лидия Николаевна, хаçатăн иртнĕ номерĕнче пĕлтернĕ "Ылтăн чĕре" акци районта мĕнле пырать?**

- Тавтапуç, аса илтертĕр. Социаллă хӳтлĕх системи пурне те пултарайманни паллă ĕнтĕ, укçа-тенкĕ нумай кирлĕ, çавăнпа та ырă кăмăллă çынсен пулăшăвĕшĕн эпир яланах кăмăллă. Кунта ыркăмăллăх апачĕсем те (вĕсене час-часах йĕркелес килет те вĕт), усă курнă, тумтир пуçтарасси те, укçа-тенкĕ енчен пулăшасси те кĕрет. Укçа çитмен çакăн пек йывăр вăхăтра та "Нурлатнефть" НГДУ УТТ коллективĕ (И.Г.Валиуллин), тĕслĕхрен, ашшĕпе амăшĕсĕр тăрса юлнă çемьене укçа пуçтарса пама пултарчĕ. Пирĕн 40205810300000170031 БИК 049241000 ИНН 1632002325 номерлĕ счета вунăкунлăх вăхăтĕнче ĕç коллективĕсем, обществăлла организацисем, уйрăм çынсем укçа куçарасса шанатпăр. Вĕсене пулăшу кирлисем патне çитерессе шантаратпăр. Пĕрремĕш взноссем, паллах ĕнтĕ, пур.

**Инвалидсен вунăкунлăхĕ декабрĕн 1-мĕшĕнчен пуçланать. Вăл активлă, усăллă иртессе шанатпăр. Хальхи вăхăтра пурне те йывăр, инвалидсене вара уйрăмах кансĕр. Ан тив, çак кунсенче вĕсем хăйсене пулăшнине тепĕр хут туйччăр.**

**Т.НАЗАРОВА.**

# Литература страници



## Парне

Пĕр-пĕр ырă хыпар илтни кирек камшăн та пысăк савăнăç. Парне илсен тата! Кăмăл çĕкленсех каять.

Акă паян ача чухнехи юлташран Василий Орловран асăнмалăх парне илтĕм - хăй çырнă “Ангел-хранитель” кĕнекине. Ăна авторăн 80 çул тултарнă юбилейĕ тĕлне хатĕрленĕ пулнă.

Кĕнеке ячĕ темле асамлă, ăна курсанах хăвăртрах уçса вулас килет. Унта пурĕ 24 хайлав. Шÿтсем, калавсем, асаилÿсем.

Вĕсене вуланă май ума хамăр таврари паллă вырăнсем, хăш-пĕр пĕлĕшсен сăнарĕсем тухса тăраççĕ.

Ара, çапла пулмалла та. Автор пирĕн Ерепьелпе кÿршĕллĕ Уксăмлă ялĕнченех вĕт.

Астăватăп-ха: Ваçça Куракъелĕнче пиллĕкмĕш класрах перине туптама пуçларĕ. Малтанхи сăввисенче тăван тавралăх, пĕлĕш-тантăшсем çинчен çыратчĕ. Тăванлăх ăна çамрăкранах хăйĕн ытамне илчĕ пулас.

Çичĕ класлă шкула Василий Орлов Якаелĕнче пĕтерчĕ. Ку хăйсен ялĕнчен çывăхрахчĕ. Кайран педрабфакран, пединститутран вĕренсе тухрĕ. Вăрçă тапрансан фронта кайрĕ. Демобилизаци хыççăн вара Якаелĕнчи вăтам шкулта ачасене вырăс чĕлхипе литературине мĕн пенсие тухиччен вĕрентрĕ.

- Эпĕ халĕ Çырчаллăра пурăнатăп, - каласа парать Василий Прохорович. - Анчах та Çарăмсан тăрăхне çитсе курас, унти çынсемпе тĕл пулас кăмăл иксĕлмест.

Василий Прохорович 80 çултан иртнĕ пулин те, пысăк хавхаланупа çырать. Ку кĕнеки юлашки пулмĕ теесшĕн. Халиччен çыр-нисене пухсан темиçе тома çитĕ: унăн 100 ытла калав, 200 ытла сăвă-юптару тата “Икĕ çăл”, “Хĕвел юппи-сем”, “Пиçнĕ-пиçмен çырлине” кĕнекесем пичетленнĕ. Сăввисемпе калавĕсем, юптарăвĕсем пирĕн “Туслăх” хаçатра тăтăшах çутă кураççĕ.

Эпĕ хамăн çыравçă-юлташа малашне те пысăк çитĕнÿсем сунатăп.

## Пике такмакĕсем

**(Чăнласа та шÿтлесе)**

Пике шутне кĕнĕ май
Каччă суйла пуçларăм,
Каччăсем тĕрли нумай -
Хăшне кайса ыр курам.

Кÿршĕрех пур Кĕркури
Хăй хитре, ăста вăйçă.
Ун пекки урăх пур-и?
Йĕкĕлти те ултавçă.



Тракторпа ĕçлет Çумма
Йăваш та ĕçре паллă.
Анчах та ун тумне çума
Туртăнаймĕ ман алă.

Ялан çÿрет пасара
Чее те пуян Павăл
Ĕçет, шырать ясара.
Çук! Кăмăла каймасть вăл.

Хура Якур хĕрсене
“Жигулипе” чуптарать.
Унтан вара вĕсене
Чике тăршшĕ ларттарать.

Тĕнче карĕ пăтранса, -
Пăсрĕç укçапа эрех.
Тăрассăм килет шанса -
Тăнăç пулĕ пурпĕрех.

**Хĕв. САВГАЧЕВ,**
**журналист, писатель.**

## Çăпка юрри

Чăнкăр-чăнкăр сиктĕрме,
Сăпки çăмăл сиктерме.
Тек ан макăр, Михала,
Тем те курăн малалла.
Ан çухат çут ĕмĕтне,
Хып-ха пушă ĕмкĕчне.

Ай-яй-яй, ĕмĕтне,
Хып-ха пушă ĕмкĕчне.

Заводран ĕç укçине
Тÿлемеççĕ аннÿне
Пенсие те ку хутра
Илеймерĕм вăхăтра.
Колхозран çеç аçуна
Улăм пачĕç пĕр çуна.

Ай-яй-яй, улăмпа
Пултараймăн пурăнма.

Аппу санăн Хĕветуç
Шкула чупать çара пуç.
Ав епле халь самана,
Айăплаймăн никама
Йĕм илмелĕх укçа çук,
Тĕнчере йĕрке çук.

Ай-яй-яй, укçа çук,
Тĕнчере йĕрке çук.

**В.ОРЛОВ.**

## АННЕ

Ах, аннеçĕм, анне,
ватăлма ан васка;
Кирлĕ мар шухăшпа
хăвна ху ан ăска.
Тÿлекрех, канарах
пурăн эс малашне;
Парĕ вăл, шансанах,
Турă хăй пулăшне...
Хуштăр Турă тата
сахал мар пурăнма;
Мăнуксен туйĕнче
юрласа ташлама!

**Андриян**
**ГРИГОРЬЕВ.**

## Анекдот

***КАЛАВ***

Ир çинчен лайăх хыпрĕ, вăлтуна туртса кăна ĕлкĕр. Сехет саккăралла вăлта хăмăшĕсем тĕлĕрме пуçларĕç.

- Мĕн тытни - çитнĕ. Хамăр валли кăна мар, кÿршĕсене кучченеç памалăх та пур. Ларăр, - чĕнчĕ Хĕветĕр пичче чашăксем çине пулă шÿрпи антарнă май. Эпир унпа халĕрех кăна паллашнă-ха. Вăл кунти Çарăмсан хĕрринчи Маяк поселокĕнчен.

Апатланнă хушăра виçсĕмĕре пĕр “çуттине” пуштрăмăр та Пайдуганов Иван, эпир ăна хамăр хушăра Ваня тетпĕр, çунатлансах такмаксем шăрантарса ячĕ. Темлине те пĕлет. Пĕр такран анекдотсем калама пуçларĕ. Эпĕ каçса кайсах ахăлтататăп. Хĕветĕр пичче питĕ сăпайлăн тутисене çеç култаркаласа илет.

- Пĕррехинче Турă патне Акăлчан, Америка тата вырăс президенчĕсем пынă, - малалла çаптарать Ваня. - “Хăçан пирĕн патшалăхра çитменлĕхсем йăлт пĕтĕç-ши?” - ыйтать Акăлчан пуçлăхĕ. “Тата 20-25 çултан”, - тавăрать Турă. “Ай-хай, эпĕ унччен пурăнаймăп вĕт”, - пуçне пăркалать Мейджер. “Хăçан пирĕн халăх пур енчен те çителĕклĕ, тулли кăмăлпа пурăнма тытăнĕ-ши?” - ыйтать Америка президенчĕ. “Тата 25-30 çултан”, - тавăрать Турă. “Ай-хай, эпĕ унччен пурăнаймăп вĕт”, - пуçне пăркалать Клинтон. Ельцина черет çитет. “Хăçан та пулсан пирĕн Раççей йĕркене кĕрĕ-ши, çук-ши?” - ыйтать вăл. “Ай-хай, эпĕ унччен пурăнаймăп çав,” - пуçне пăркалать Турă.

Хĕветĕр пичче чылайччен тутисене култарса тăчĕ-тăчĕ те çапла каласа хучĕ.

- Халĕ ĕнтĕ ирĕк, такам çинчен те тем те илтетпĕр, хамăр шухăш-кăмăла уççăнах калама пултаратпăр. Манăн пурнăçра вара пĕр пĕчĕк анекдот питĕ пысăк хака ларчĕ. Унтанпа хĕрĕх çул иртнĕ пулин те çаплах манăçмасть. 60-мĕш çул Хусанти мединститутра виççĕмĕш курсшăн экзамен паратăп. Сĕтел çине саркаласа хунă 30-40 билетран пĕрне илтĕм. Унта виçĕ ыйту, маншăн пурте çăмăлскерсем. Пĕрне ответлетĕп, теприне... Профессор аллине çĕклесе “Çитрĕ, çитрĕ! Отлично”, - тесе чарса кăна пырать. Виççĕмĕш ыйтура этем скелетне характеристика пама хушнă. Сĕтелтен виç-тăватă утăмра манпа пĕр танрах скелет тăрать. Ăна кĕнчеле йывăççи пек вăрăм патак çине мăйĕнчен алюмини пăралукпа çакса хунă. Урисем аялтитăваткăл хăма çине леки-лекми тăраççĕ. Алла указка илтĕм те скелет миçе пайран тăнине, хăш пайĕ мĕншĕн кирлине тата вăл мĕнле шăмăсенчен тăнине вунă минутра мăйăр çинĕ пек шĕкĕлчесе патăм. Хам каланипе хам çунатланса пытăм, мĕншĕн тесен ку ыйтупа эпĕ питĕ тĕплĕн хатĕрленнĕ.

Комисси членĕсем пĕрпĕринпе пăшăлтатса илчĕç те профессора кăт чышрĕç (лешин хăлхи хытăрах). Профессор ручкипе сĕтелле шăк-шăк! - тутарчĕ. “Çитĕ, чарăн” тенине пĕлтерчĕ ĕнтĕ ку. Чăнах та, чармасан тата сехет те калама пултаратăп.

- Ăстăн енĕпе мĕнлерех пулнă-ши çак çын? - ыйтрĕ комисси членĕсенчен пĕри.

- Мимине курмасăр калама хĕн, - терĕм скелет çумĕнчен пуç шăммине вĕçертсе, анчах та ку “котелока” сахалтан та пĕр килограмм çав мими текен аслă матери шăнăçма пултарнă. Тата унăн ал-ура сыппписем, çурăм шăммисем хытах якалса пĕтнине шута илсен, çакскер тăтăшах ĕçленĕ. Апла пулсан, вăл самаях ăслă çын пулнă.

- Эсир ăна миçесене çитсе вилнĕ тетĕр? - ыйтрĕ тепри. Çак самантра темшĕн колхозра бригадирта ĕçленĕ Тимук пичче аса килчĕ. Ăна 37-мĕш çул персе пăрахнă. Вăл ун чух 40 çеç пулнă.

- Вăл ватă мар, хĕрĕхсенче кăна пулнă, анчах хăй вилĕмĕпе вилмен, ăна персе пăрахнă.

- Персе? - сасартăк тĕлĕнчĕç экзамен йышăнакансем. - Ăçтан пĕлетĕр?

- Акă - сĕтел патне пырсах ĕнсине пуля ватса кĕнĕ пăрçаран пысăкрах шăтăка кăтартрăм.

Комисси членĕсем ырă та, хаяр та чĕнмерĕç. Вĕсем пуç шăмминчи çак сиене халиччен асăрхаман иккен.

- Репресси вăхăтĕнче “Халăх тăшманĕсене” çав месл етпе вĕлерне. Апла - ку скелета Хусанти Архангельски масарĕ çинчен илсе килнĕ. Вĕсене чăнах та çавăнта пытарни çинчен хаçатра вуланăччĕ! - çирĕплететĕп хам каланине.

- Çитрĕ, çитрĕ! - темиçен пÿлчĕç мана. Профессор зачетка çине паллă лартас тенĕ вăхăтра унпа юнашар ларакан кукша пуçлă, шĕвĕр сăмсаллă доцент тепĕр ыйту пачĕ:

- Эсир юмăç пекех чухлатăр. Апла пулсан калăр-ха, çак çын служащи, рабочи е хресчен пулнă-ши?

Кĕтмен çĕртен ман айван пуçăмра пĕтĕм студент пĕлекен анекдот çиçĕм пек çиçсе илчĕ.

- Хăвăрах куратăр, - указкăпа скелетăн аяк пĕрчисене çÿлтен аялалла шăкăртаттарса антăм - вăл партипе правительство интересне чи çÿлти шая хуракан, чи тÿрĕ кăмăллă колхозник пулнă. Пĕр иккĕленсе тăмасăрах çăмне те, тирне те, ашне те, çăмартине те - пĕтĕмпех патшалăха панă, - терĕм.



Кукша доцентăн куçĕсем çамки çинех тухса ларчĕç, мана залран тухма хушрĕç. Тепĕр вунă минутран профессор коридора тухса зачетка тыттарчĕ.

- Мĕн туса хутăн? - тĕлĕнсе ыйтрĕ вăл. - Эпĕ сана “5” лартма хатĕрленнĕччĕ. Çăвар - кăççатă кунчи мар, ăна пĕререх калаçма вĕренмелле. Юлашки ыйтăва обком представителĕ юри йĕкĕлтесе панине ăнланмарăн-им?

Çав манăн юлашки экзамен пулчĕ. Урăх кĕртмерĕç, кăларсах ячĕç... - ал сулчĕ Хĕветĕр пичче пиртен уйрăлнă май.

**Василий ОРЛОВ.**

*Дмитрий ВТОРОВ:*

Палланӑ сӑнсем

# "Эпĕ телевиденипе чирлерĕм"



***ТРТ "Çĕнĕ хыпарсем" ертӳçи Дмитрий Второв çирĕм иккĕре кăна-ха, апла пулин те унăн пурнăçне икĕ пая пайлама пулать. Телевидениччен тата телевиденири, тепĕр тесен иккĕмĕшĕ пĕрремĕшĕнчен кăшт кăна кĕскерех. Пĕррехинче ашшĕ (Дмитрин ашшĕпе амăшĕ баскетбол вăййин тренерĕсем) ăна, 6 çулхи ачана, ТВ студине çутатакан пулса ĕçлекен пĕлĕшĕ патне илсе кайнă, темиçе çул иртнĕ хыççăн вара вăл телевидени çинчен кăна шухăшлама пуçланă. Пушă коробкăсенчен телевизор ещĕкĕ евĕрлĕ туса хăй телеертӳçĕ рольне пурнăçлама хăтланнă. Каярах та хăйĕн ĕмĕтне пурнăçа кĕртес тесе пурăннă. 1991 çулхи август уйăхĕнче пăтăрмах вăхăтĕнчи лару-тăрăва кăтартнă чухне саккăрмĕш класра вĕренекен Дмитрий Второв телевизор экранĕ патĕнчен кайман, уйăх иртсен вара Хусан хулинчи Ленински районĕнчи МЖК студийĕнче хăйĕн пĕрремĕш передачине иртнернĕ. Эфира вăл "Шкул ачисем валли хыпарсем" передача ертӳçи пулса тухнă, часах ăна сăнран паллама, студие шăнкăравлама, кăларăмсем валли çĕнĕ пуçарусем пама тытăннă. "Эфир" та пулнă, каярах Дмитрий Тĕп ТВ валли сюжетсем тума тытăннă, астăватăр пулĕ, ачасем валли "Сорока" та "Там-там новости" передачăсем пурччĕ. Пĕррехинче уйрăмах ăнăçлă сюжет хыççăн, ирхине кăтартакан "Чулпан" программăра та кăтартнăскершĕн, ăна Тутарстанри Патшалăх телерадиокомпанин ун чухнехи ертӳçи ТРТпа çыхăнса ĕçлеме сĕннĕ. Унтанпа тăватă çул иртнĕ ĕнтĕ. Дмитрий Второв "Чулпан", "Завтра" программăсене хутшăннă, 1996 çулхи апрель уйăхĕнченпе вăл "Çĕнĕ хыпарсем" передачăна илсе пырать. Кăçал вăл Нурлатра икĕ хутчен пулнă, ӳкернĕ. Вăл питĕ уççăн калаçать, ыйтусенчен пăрăнмасть.***

**- Дмитрий, эсир хăвăр ĕçĕрте чи кирлĕ элемент мĕн тесе шутлатăр, тен, ăнăçлăх пулĕ?**

- Информацие тарăннăн, тĕплĕн парасси - ку пирĕн коллектившăн питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Кунта чылайăшĕ профессионалсен комментарийĕнчен килет, эпир çавăн пеккисене тупма тăрăшатпăр.

**- Телеэфирта сирĕншĕн, сăмахран, ылтăн правило пур-и?**

- Кĕскен каласан, ку объективлăх тата оперативлăх.

**- Телевиденире ĕçленĕ кун сирĕн мĕнле йĕркеленет?**

- Ыйтăва ăнлантăм. Çапла... Студие ирхине 8 сехете çитетĕп. Материалпа ĕçлетĕп. 13 сехетре планерка, унта иртнĕ кунхи кăларăмсене тĕплĕ тишкерсе тухатпăр, ăнăçлăхсемпе çитменлĕхсене пурне те палăртатпăр. Кунтах - пирĕн коллективра 20 çын - каçхи программăсенче мĕн кăтартмаллине палăртатпăр, çитес куна планлатпăр. Ĕç нумай: тухса çӳремелле, ӳкермелле, çырмалла тата ытти те... 16-17 çын передача монтажлать. Программа иртнернĕ кун çурçĕр иртсен таврăнатăп.

**- Апла пулсан, хăвăн пурнăçу валли вăхăт сахал. Мăшăру та кăмăлсăр пулма пултарать. Хĕрарăм хăйне тимлĕх уйăрнине юратать вĕт.**

- Хамăн пурнăçа эпĕ çемьепе кăна çыхăнтармастăп, çаплах туссемпе, ĕçтешсемпе калаçни пысăк вырăн йышăнать. Унсăрăн пурăнма май çук. Телевидени вара... Пĕлетĕр-и, ку вăл ахаль заняти çеç мар, пурнăç сăнарĕ те. Çапла майпа вара унăн правилипе çеç пурăнатăн, вăл вара хăйĕн графикĕпе кăна пыртарать. Çавăнпа та чылайăшне пăрахăçлама тӳр килет.

**- Ертсе пыракансен имиджĕпе кам ĕçлет?**

- Пирĕн гример тата стилист пур, эпир вĕсен канашĕсемпе тата рекомендацийĕсемпе усă куратпăр.

**- Эсир телевизорпа тухса калаçма мĕнле вĕрентĕр? Эсир нумай вулатăр тата хăвăрăн ĕçтешĕрсен опычĕпе тĕплĕнрех паллашас тесе тăрăшатăр пулĕ?**

- Эпĕ çавăн пек тăвас тесе питĕ тăрăшатăп, анчах та кĕнеке вулама вăхăт çитмест. Эсир шанмăр та, анчах хăш-пĕр чухне ОРТ информацине итлеме те вăхăт пулмасть. Эпĕ Есенина питĕ юрататăп, çаплах Толстойпа Достоевскин кĕнекисене те тĕплĕнрех вулас килет, çапах та... Кĕскен каласан, вăхăт çитменни халлĕхе маншăн тĕп вырăн йышăнать-ха.

**- Икĕ сăмахпа калăр-ха. "Татарстан" ГТРКа Ильшат Аминов килсен мĕн улшăнчĕ?**

- Ертсе пыраканпа коллектив хушшинче пĕр-пĕрне ăнланас процесс пуçланчĕ.

**- Эсир патшалăх телевиденийĕнчи çĕнĕлĕхсем çинчен хăвăр мĕн шухăшланине каласа параймăр-и?**

- Пĕлтерӳсен çĕнĕ сетки 1999 çулхи январĕн 1-мĕшĕччен çеç вăйра. Халлĕхе пирĕн рейтинг результачĕсем çук-ха, мĕншĕн тесен пирĕн "Çĕнĕ хыпарсен" иккĕмĕш кăларăмĕ эфира кая юлса - 22 сехет те 50 минутра кăна тухать, шел пулин те, халь эпир хамăра итлекенсене чылай çухатрăмăр. Передачăн вăхăчĕ ӳсрĕ, малтан 15 минут, халь вара 20 минут пырать. Трансляци вăхăтне вара тутарла тата вырăсла передачăсемпе тивĕçтерес тĕллевпе улăштарнă. Паллах, тĕрлĕ шухăшлакансем пур. Халлĕхе вĕсене тĕпчеççĕ-ха.

**- Дмитрий, сирĕн тата мĕнле программăсене хутшăнас шухăш пур?**

- Ку ыйтăва мана час-часах параççĕ. "Çĕнĕ хыпарсем" передачăна илсе пырасси манăн ĕç тесе шутлатăп, çавăнпа та урăх çĕнĕ программăсем йĕркелес тата хутшăнас кăмăл халлĕхе çук.

**Çакăнпа пирĕн калаçу вĕçленчĕ. Дмитрий Второва черетлĕ телесъемкăсем кĕтетчĕç.**

Т.НАЗАРОВА.

# Вăрăсемпе кĕрешмелле

Вăрлассине сирсе ярасси шалти ĕçсен органĕсенче ĕçлекенсен тата предприятисемпе учрежденисен администрацийĕсен пĕрремĕш задачисенчен пĕри шутланать. Вăрăсене администраци енчен тата уголовнăй явап тыттараççĕ е вăрланă пурлăх хакне тӳлеттереççĕ.

Вăрланă япала хакĕ вăтам ĕç укçинчен иртмесен вак-тĕвек япала вăрлани шутланать. Административлă тата уголовнăй явап тыттармалла пулсан материалсене суда яраççĕ. Вăрлакан çын тĕлĕшпе общественность витĕм кӳмелли мерăсемпе те усă курма пултараççĕ, ун пек чухне материалсене вăрланă çын ĕçленĕ организацие ярса параççĕ.

Вăрлассине сирсе ярасси çак ыйту çине администраци, общественность, учрежденисемпе организацисем мĕнле пăхнинчен чылай килет. Шел пулин те, вăрăсем тĕлĕшпе ялан тенĕ пекех, кирлĕ мерăсем йышăнаççĕ теме çук-ха. Сăмахран, 1998 çулхи 9 уйăхра хресченсен хуçалăхĕсен "Тĕрнеç" ассоциацийĕнче вăрланăшăн 15 çынна тытса чарнă, вĕсем тĕлĕшпе мерăсем йышăнни çинчен вара пире пĕр хутчен çеç пĕлтерчĕç. Хресченсен хуçалăхĕсен Хафизов ячĕпе хисепленекен ассоциацийĕнче 7 çынна тытнă, хуравсем - çук. Хресченсен хуçалăхĕсен "Сĕнче" ассоциацийĕнче вăрланăшăн 16 çынна тытса чарнă, 4-шĕ тĕлĕшпе кăна мерăсем йышăннă, "Черемшан" ассоциацире эпир тытнă 9 вăрă тĕлĕшпе пĕр хурав та пулмарĕ. Аш-какай комбинатĕнче тытнă 19 вăрă тата сĕт-çу комбинатĕнче тытса чарнă 4 вăрă тĕлĕшпе мĕнле мерăсем йышăнни çинчен нимĕнле хурав та пулмарĕ. .Предприятисен администрацийĕсен вăрăсемпе кĕрешмелли тивĕçĕсемпе усă курмалла.

Пурлăх енчен явап тытакан çынсене тĕрĕс суйласа илмелле, финанспа хуçалăх учетне лайăх йĕркелесе ямалла, çавăн чухне вара пирĕн магазинсен çӳлĕкĕсем çинче сĕт те, çу та татăлмĕ.

Предприяти администрацийĕ мĕнле те пулин сăлтава пула вăрăсене палăртма пулăшмасан, ку милици ĕçне кăткăслатать. Çавăн пек предприятисене эпир уйрăм тимлĕх уйăратпăр, çавăнпа та вак-тĕвек вăрлакансене палăртас тĕллевпе мероприятисем час-часах иртеретпĕр.

**А.ЛОГИНОВ,**
**Нурлатри ГРОВД çумĕнчи ведомствăра тăман хурал пайĕн аслă инспекторĕ.**

*Уяв юррисем*

## Чăнкăр-чăнкăр тăвать-çке

Тарăн варăн кусĕнче
Така пусса çирĕмĕр.
Хĕрĕх юман айĕнчен
Хĕр вăрласа тухрăмăр.

* * *

Упиял кĕперĕ - хуп кĕпер
Упи каçса кайнă чух
Кĕмсĕр-кĕмсĕр тăвать-çке.
Кĕмсĕр-кĕмсĕр тăвать-çке.

Хамăр ял кĕперĕ-йĕс кĕпер
Таканлă ут каçнă чух
Чăнкăр-чăнкăр тăвать-çке,
Чăнкăр-чăнкăр тăвать-çке.

* * *

Иван, Иван, Ука, Ука тееççĕ.
Вырăсла хапха, тимĕр тăпса, тееççĕ.
Вырăсла хапха çил хапхана тăрас çук,
Ял-ял ачи ял ачине тăрас çук.

**Пухса йĕркелекенĕ Е.ИЛЮШКИНА.**

## Сире концерта кĕтетпĕр!

**Виталий Агапов - Нурлат сцени çинче. Куракансем ыйтнипе декабрĕн 1-мĕшĕнче Нурлат районĕн культура çуртĕнче паллă композитор-юрăçăн Виталий Агаповăн тата унăн концерт ушкăнĕн концерчĕ пулать.**




**Концерт 19 сехетре пуçланать, билет хакĕ 20 тенкĕ.**

# ПĔЛТЕРӲСЕМ

## Сутатпăр:

*Советская урамĕнчи 193-мĕш çуртри пĕр пӳлĕмлĕ хваттер (2-мĕш хутра). Телефон: 5-42-38.*

* * *

*Ц-257 телевизор тата баян, хаклă мар. Адрес: Горький урамĕ, 23.*

* * *

*Çуна çинчи 4,5х7,5 метрлă гараж (илсе тухма), çӳлĕшĕ 2,2 метрлă хапха. Адрес: Декабристсен урамĕ, 11.*

## Тĕрли:

*Хамăр çĕршывра туса кăларнă сĕтел-пукана пуçтарса лартатпăр. 5-12-38 номерлĕ телефонпа 18 сехетрен пуçласа 20 сехетчен шăнкăравламалла.*

* * *

*А/резина шиплатăп. Адрес: Ленинградская урамĕ, 9-2. Свидетельство номерĕ - 673, серийĕ - 5.*

* * *

*Нурлат райповĕн апат-çимĕç комбиначĕ халăхран аш йышăнать: ĕне ашне 12 тенкĕпе, сысна ашне 13 тенкĕпе. 2 эрне хушшинче тӳлесе тататпăр. 2-16-04, 2-21-15 номерлĕ телефонсемпе ыйтса пĕлмелле.*

**Ачасемпе çамрăксене ӳт-пӳ енчен çирĕплетекен клубра (хулари стадион) ĕçлеме вăтам специальность е аслă пĕлӳ туяннă тренер кирлĕ. ДЮКФП директорĕнчен ыйтса пĕлмелле.**

Редактор Т.И.БУРАЙКИНА.

Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тутарла, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 893. 4564